**НОМЕРТЕ:**



Бизнесвумен, лайăх анне, хитре хĕрарăм — **«Çĕнĕ пурнăç çынни»**

2 стр.

Çирĕп сывлăхпа яштака кĕлетке вăрттăнлăхĕ — спорт



2 стр.



Вăл Хусана та, Мускава та илемĕпе тыткăнларĕ

3 стр.



Европа принцессисене кĕпе çĕлесе паракан Игорь Дадиани — паян пирĕн хăна

4 стр.

ЯШ – КĔРĔМ ÇĔКЛЕТ ПУРНĂÇА

# ÇУНАТЛĂ ÇАМРĂКЛĂХ



*«Суварăн» хушма хаçачĕ*

**1№ (46) эрнекун, кăрлач уйăхĕн (январĕн) 31-мĕшĕ, 2003 çул**

# «НИАГАРА ШЫВ СИККИНЕ КУРАСЧĔ»



**Фатима (ячĕ «çветуй» тенине пĕлтерет) Валиева 17 çулта, 179 сантиметр çӳллĕш ӳснĕ. Кĕлеткипе тĕнче стандарчĕсене çывăх, 89–59–90. Таджикистанри Ленинабад хулинче çуралса ӳснĕ. 1991 çулта çемйипе Пĕкĕлмене куçса килеççĕ. 2002 çулта КГТУна вĕренме кĕрет. Аппăшĕ Гузель те çавăнтах управленипе автоматизаци факультетĕнче вĕренет. Фатима спорт, пирожнăйсем юратать. Савнă тусне тĕл пулман-ха.**

«Эпĕ кĕтмен те, шанман та мана «Мисс Татарстан-2002» суйлĕç тесе. Манран хитререх хĕрсем те пурччĕ вĕт», — тет Фатима Валиева, республикăри чи селĕм пике.

— Апла мĕншĕн сана çак титула пачĕç? — кăсăкланатăп эпĕ хавхаланнă пикен çунса тăракан куçĕсенчен пăхса.

— Хĕрсем пурте питĕ хумханчĕç. Пур конкурсра та хăйсене лăпкă, йăл кулăпа кăтартаймарĕç пулас. Эпĕ вара залри халăха юратса, тăвансем вырăнне хурса сцена çине тухрăм. Ырă туйăмсене пурте туяççĕ-çке. Çавă пулăшрĕ те мана.

— Мĕн улшăнчĕ санăн пурнăçунта çак конкурс хыççăн?

— Çынсем! Унччен асăрхаман çынсем те халĕ мана юратаççĕ, ăшă куçсемпе пăхаççĕ. Хĕрачасем пурте маншăн савăнчĕç, каччăсем вара алă çинче йăтса çӳременти çеç. Урамра та паллаççĕ. Ку питĕ савăнтарать.

Фатима Валиева Хусанти патшалăх техника университетĕнче (КГТУ) пĕрремĕш курсра вĕренет, вычислительнăй техника инженерĕ пуласшăн. Ача чухне адвокат пулма ĕмĕтленнĕ, анчах халĕ компьютерсем ытларах илĕртеççĕ. Çамрăкăн ĕмĕчĕсем, пурнăçри тĕллевĕсем тĕлĕнтерчĕç мана. Иккĕмĕш курсран вăл хушма факультета юриста вĕренме каясшăн. Каярах хăйĕн фирмине уçнă чухне çак пĕлӳсем кирлĕ пулĕç тет. Халĕ чиперкке пĕрремĕш сессири экзаменсене тытать, халлĕхе пурне те «пиллĕклĕх» парать. Пĕкĕлмери 2№ ятарлă физикăпа математика лицейне вăл ылтăн медальпе пĕтернĕ. Хитре хĕрсем те ăслă пулаççĕ иккен, акă, Фатима тепĕр çирĕплетӳ.

Çакăн пек илемлĕх конкурсĕсене те Фатима пĕрремĕш хут çеç хутшăнмасть. Тăван хулинче 2002 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнче «Пĕкĕлме сăнĕ» конкурс иртнĕ. Унта пирĕн чиперкке тĕп титула çĕнсе илнĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ — тепĕр пысăк çитĕнӳ.

— Анне мана конкурса хутшăнтарасшăн марччĕ. Унта малтанах веçех суйласа хунă терĕ. Конкурс хыççăн тепĕр ир аннене ĕçне шăнкăравласа çĕнтернине калалрăм. Вăл тĕлĕннипе тенкел çинчен ӳкнĕ. Унтан вĕсем пĕтĕм больницăпа, манăн анне невролог пулса ĕçлет, уявланă. Залра манăн Гузель аппапа йысна пăшăрханса ларчĕç. Аппа нимĕн те калаймасть, йĕрет çеç, аттепе йысна мухтанаççĕ.

— Хăвăн çав самантра мĕнле туйăмсем çуралчĕç?

— Кĕтменнипе ним шухăшлама та пĕлместĕп. Паллах, савăнăç, савăнăç, савăнăç! Ăна та каярах çеç ăнлантăм. Конкурс каç фуршет хыççăн таксипе кайрăмăр. Шофер эпĕ «Мисс Татарстан» пулнине пĕлсен шампанскипе шоколад парнелерĕ. Киле, общежитие çитсен, кĕртмеççĕ тата. Шакка-шакка вахтера вăратрăм. Вăл та пире вăрçмарĕ, ыталаса саламларĕ. Тепĕр кунне хам вĕренекен ушкăнри ачасем тăрса алă çупса кĕтсе илчĕç, чечексем парнелерĕç.

— Халĕ эсĕ Фатима çеç мар, эсĕ Тутарстанри чи хӳхĕм пике. Малашне пурнăçу та улшăнатех. Хăвăн мĕнле шухăшсем?

— Эпĕ унччен пĕр шухăшсăр ача пек сиккелесе çӳреттĕм. Халĕ ун пек çăмăлттай пулма юрамасть. Манăн «Мисс Татарстан» титула чыслă тытмалла.

Малашне ман пурнăçра пысăк улшăнусем пулмĕç тетĕп. Чи малта вĕренӳ, унтан ытти. Пурнăçри тĕп тĕллев — пур енчен те аталанасси. Килте стена çинче график çакăнса тăрать — «Манăн ӳсĕмсем». Пур çитĕнӳсене те унта палăртатăп. Акă, часах «Мисс Россия» конкурса хутшăнмалла.

Тата Фатима спортпа питĕ туслă. Ачаран гимнастика секцине çӳренĕ. Пĕкĕлмере пурăннă чухне хĕлле кӳлĕре шыва кĕнĕ. Халĕ Хусанта сивĕ шывпа сапăнать. «Çавăнпа нихăçан та чирлеместĕп», — тет вăл. Апатра вара хăйне чарма тивет, ытла та тортсем юратать-çке. Кино çăлтăрĕсенчен Джулия Робертса кăмăллать. «Вăл хитре хĕрарăм тата унăн актер таланчĕ те питĕ пысăк», — хаклать чиперкке.

Тутарстан пикин халлĕхе савнийĕ çук. Хальччен никама та кăмăлламан-ха вăл. Унăн савнийĕ ырă кăмăллă, лăпкă, ăслă тата нумай пĕлекен çын пулмалла Фатима шучĕпе. Вăл çирĕмри яш та, аслăрах арçын та пулма пултарать. Чи пысăк ĕмĕчĕ — Ниагара шыв сиккине кайса курасси: «Эпĕ Таджикистанра Ленинабад хулинче пурăннă чухнех пĕчĕкçĕ шыв сиккисене пăхма çӳреттĕмччĕ. Хĕвел пайăркисем çӳлтен ӳкекен шывпа выляни сĕре илемлĕ. Мĕнле кăна сăнсем палăрмаççĕ унта. Мăнаçлă Ниагара вăйне те курасчĕ». Пирĕн чиперкке отличница çеç мар, тата романтик та иккен.

**Сильвия БУЛТЫКОВА.**
**Александр ЭШКИНИН**
**сăнӳкерчĕкĕ.**



# ÇУТĂ ĔМĔТПЕ

Чистайри педучилищĕрен пин-пин çамрăк вĕренсе тухнă, вĕренеççĕ те. Республикăри тĕрлĕ кĕтесрен вĕренме килеççĕ кунта. Вĕсем хушшинче чăвашсем, тутарсем, вырăссем пур. Халĕ тата чăвашсене савăнмалăх хыпар: унта чăваш уйрăмне уçнă.

Çак училищĕре вĕренекен пысăк ĕмĕтлĕ, çутă тĕллевсемпе малалла талпăнакан чăваш пикипе Алена Кашкаровăпа паллашма тӳр килчĕ. Вăл 2-мĕш курсра вĕренет. Яштака пӳ-силлĕ, ялкăш куçлă ăмсанмалла чипер хĕртен вĕренӳ пирки ыйтса пĕлме шутларăм.

— Эпĕ ачасене чунтан юрататăп. Вĕсемпе чух ачалăх тĕнчине куçса кайнăн туйăнать. Чун туртнипе ăс пухатăп кунта.

Алена Чистай çывăхĕнче ялта пурăнать. Ăçта та ăна пур ĕçе те чыслăн, пултаруллă пурнăçланăшăн хисеплеççĕ. Сăмах май, вăл «Сувар» хаçата юратса вуланине те пĕлтерес килет. Çакă та мана савăнтарчĕ. Тата çулталăк вĕренсен вăл диплом илет, хăй профессийĕпе ĕç тупасшăн хĕр. Мĕнех, Аленăна эпĕ пурнăçра пысăк çитĕнӳсем тума, ĕçне кура хисеп тупма сунатăп.

**Валентина ЯКОВЛЕВА.**